Е-92
65301

П. А. ЕФРЕМОВ



# БУКВАРЬ

ЧУВАШГОСИЗДАТ • 1949



П. А. ЕФРЕМОВ

# БУКВАРЬ

*Чăваш АССР*
*Çутĕç министерстви*
*çирĕплетнĕ*

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1949










БУКВАРЬ








































ШКУЛ



Аа
Уу





Аа



А... а... а... а!





Уу



У... у... у... у... у!



# Шш Мм





Ш... ш... ш... ш!

Шш







МУ!

АМ

ам



Мм



М, Ш, У, Ш, А, М, А, У.

*ш ш у у м ам*



а у ш м

У, Ш, М, А, М, У, Ш, А.

ш, а, м, ш, у, а, м, у.

Ау. Ам. Аш. Ам. Ау. Аш. Ам.
Уа. Ум. Уш. Уа. Ум. Ум. Уа.
Ам. Ум. Ау. Уа. Уш. Ум. Ам.
Ша. Шу. Ша. Ша. Шу. Шу.
Ма. Му. Му. Ма. Му. Ма.
Аш. Ша. Ум. Шу. Ам. Ма.
Ау. Уа. Ма. Ма. Ум. Му. Уш.
Ау. Ау. Ам. Ам. Уш. Уш. Ша.
Ма. Ма. Му. Му. Шу. Шу.

*аш, уш, ам, ум, му.*

# Х х



У-ух!



Хх

Ах. Ух. Ах. Ах. Ух. Ух. Ах. Ух.
Ха. Ху. Ха. Ху. Ху. Ха. Ху.
Ах. Ух. Ха. Ах-ах. Ух-ух. Ха-ха.
Ам. Ум. Ма. Шу. Уш. Аш.
Хам. Хаш. Хум. Хуш. Хам. Хум.
Ах. Уш. Хам. Ха-ма. Ха-ма хуш.



Хам! Хам! Хам!



# Лл



ала



лаша

Ал. Ул. Ала. Ула. Ама. Ал. Ла. Лу. Хам. Хал. Хул.

Ал. Ах. Ул. Ух. Ум. Ам. Ал. Ул. Ам.

Ла. Ма. Ха. Лу. Му. Лум. Ум.

Ма-ла. Ша-ла. Ла-ша.

Ху-ла. Ул-ма.

Ула ла-ша. Лаша ула. Ха-ха-ха. Ху-ху-ху. Ла-ла-ла. Лу-лу-лу.

Ша-ша-ша. Шу-шу-шу.



# Р р



хур



ура

Ар. Ур. Ра. Ру. Ар. Ара. Ур. Ура. Ма. Мар. Ура. Ху. Хур. Шур. Хур. Му. Мур. Хул. Хур. Ху-ра. Ум-ра. Ху-ла. А-ла. А-лар. Ху-ра. Ху-рал.

Ма-ла лар. Ша-ла лар. Ху-ра ла-ша ху-ла-ра. Ула ла-ша у-рам-ра.

Ал-лу ху-ра мар. Ман ум-ра лар.



# Нн







хуран хура    ар-ман    Нн

Ан. Ана. Ан-на. Анна. Анна, ан. Ун. Уна. Унар. Ху-ра. Ху-ран. Ар-ман. А-нар. Унар. Хул. Ху-ла. Ман. Мана. Шал. Шала. Шан. Ша-нам. Ма-на шан. Ар-ма-на ан. Ма-ла лар.

Шура, шала лар. Анна, лар-ха ма-лал-ла! Ну-ну, ула лаша, ма-лал-ла! Хура лаша ху-ла-ра. Ман ура хура мар. Анна, Шура ху-ла-ра.



# Ыы







ыраш хыр ыхра

Ах. Ух. Ых. Ар. Ур. Ыр. Аш. Уш. Ыш. Ма. Му. Мы. На. Ну. Ны. Ша. Шу. Шы. Хар. Хур. Хыр. Ман. Мун. Мын. Ын.

Ыран. Ыраш. Анна, ыра-ша ала-ма ан ман. Ра-ман, ыран ар-ма-на ан. Анна, шала-рах лар-ха. Шура, маларах ан. Ула хур урам-ра. Хур шырама хама хуш. Ыраш ала-ма Ра-ма-на хуш.



# С с







сухан сысна Сс

Ас. Ус. Са. Су. Ас. Ыс. Сы. Сар. Сур. Сыр. Сум. Сул. Са-на.

Са-ла. Су-ла. Су-ха. У-нас. А-нас. У-сас.

Са-рас. Сы-рас. Су-хан. Су-хал.

Са-на су-хан. Мана сал-ма. Са-на са-лам. Са-на ма-нас мар.

Су-хан са-хал. Ы-раш са-хал мар.

Са-ша, са-на са-лам.

Ма-ша, ма-на ан ман.



# Çç



çырла



çурла

Аç. Уç. Çа. Çу. Çы. Аçу. Уçу. Сур. Çур. Сыр. Çыр. Сум. Çум.

Су-ха. Çу-ха. Çу-на. Çур-ла. Çыр-ма. Çыр-ла. Çул-ла. Çа-ран. Çы-ран. Çум-ра. Çу-ран.

Ма-на çы-ру çыр-ма ан ман. Са-на çыр-ла, ма-на çур-ла.

Çул-ла çыр-ла са-хал мар.

Çу-ран çын. Ху-ра çырла. Çа-ра çуна. Çы-ру-ра са-лам çыр.



# Ӑ ӑ




сăрă ăса

Ар. Ăр. Ас. Ăс. Ах. Ăх. Ан. Ăн.
Сăн. Сăр. Мăр. Шăл.

Хас. Хăс. Шан. Шăн. Хам. Хăм.
Хă-ма. Шă-на. Хă-на. Хă-ла.

Шă-мă. Хă-рăм. Сă-рă. Мă-нă.

Ма-нăн. Са-нăн. У-нăн. Ха-мăн.
Ас-лă. Ăс-лă. Ан-лă.

Çара ура. Çăра ыраш. Самăр
сысна. Сарă сăрă. Хулăм хăма. Çăмлă
сурăх. Шурă çăнăх. Хура хăрăм.






сур.х ç.мха н.р. çур..

*а а ă ăлан ăса*

# Е е



Е-ле-на
ен-не

Елена

Ме. Не. Ше. Се. Çе. Ле.
Хе. Ме. Хе-хе-хе!
Çе-рем. Çем-çе. Ле-çес.
Ен-не. Ум-не. Çум-не. Хыç-не.
Ен-нел-ле. Ум-нел-ле. Çум-нел-ле. Хыç-нел-ле.

Еле-на, анне енне лар!
Ан-не, лар-ха Елена çум-не.
Ла-ша-сене шел-ле.
Çум-сене çум-ла.
Ан-не-не çыр-ла.
Елена, çыру çыр.
Ан-не-не са-лам çыр-ма ан ман.

*е е еее анне, аннене.*

# Ĕ ĕ

ĕ-мĕр
ĕç-ле



ĕне

Ĕне. Ĕ-нер. Ĕ-мĕр. Хĕр. Çĕр. Хĕл. Ĕç. Ĕç-ле. Сар.

Çар. Сĕр. Çĕр. Çĕр-ле. Çе-çен. Çĕ-çĕ. Сĕ-лĕ. Çĕ-рĕ.

Хĕр-лĕ ĕне. Шу-рă су-рăх. Са-рă ла-ша сĕ-лĕ-шĕн.

Сĕм-сĕр сысна ул-ма-шăн. Ла-ша-на ĕçĕ-шĕн ус-ра-ççĕ.

Сыс-на-на ашĕ-шĕн ус-раç-çĕ. Ĕмĕ-рех ĕç-ле, ĕç-ле-ме-сĕр ан лар.

ĕ ĕ ĕĕĕ ĕне, ĕнер, сĕлĕ.

# Вв



Ав. Ва.
Ву. Вы.
Ве. Вĕ.

вăрман

Вар. Вăр. Вал. Вăл. Ва-ра. Вă-рă. Ву-ла.

Са-ва. Сă-вă. Са-вăл. Ҫа-ва.

Ыраш выр-ма а-ван. Сă-вă ву-ла-ма а-ван. Ву-ла-ма вĕ-рен.

Ҫыр-ма вĕ-рен. Аван вула! Аван ҫыр! Ва-ра сă-вă ҫыр-ма вĕрен.



# И и



## Ил. Ир. Иш. Их.

## Иван

Ши. Ви. Ни. Ми. Хи. Си. Çи. Хир. Вир. Сир. Мир. Çил.

Си-ре. Си-вĕ. Си-мĕс. Çи-мĕç. Çи-лĕм. Çыр-ла çи. Хĕр-лĕ çыр-ла аван. Си-мĕс çыр-ла ава-нах мар.

Си-мĕс-си-не ан çи. Хĕр-ли-не ил-се çи. Хĕл-ле-хи çил сивĕ. Си-вĕ-ре шăн-мал-ла. Ан шăн. Ирех ĕçле, ĕçле, ĕçле çи.

*И И Ира, çыр, Иван*

# Йй





йăва йĕр

Ай. Уй. Ый. Май. Мăй. Вăй. Йĕр. Йĕс. Йыш. Йăх. Йă-ла.

Ă-йăр. Хă-йăр. Шă-йăр. Мă-йăр. Хă-йă. Вă-йă. Уй-ран. Сай-ра. Хăй-ра. Вăй-лă. Лăй-лай. Йăл-йăл. Ми-ша мă-йăр çинĕ. Йыс-на йĕр йĕр-ле-нĕ. Хă-йăр йы-вăр, çă-мăл мар.

Çер-çи йăва çа-вăр-нă. Йă-ви ăш-не çем-çе сар-нă. Ва-ра лар-са са-вăн-нă.

*Йăва. Йыш. Йăран.*

# Я я



Ял. Яр. Яв.
Яш. Ян. Ям.

ялав

Я-лав. Я-нах. У-яр. Хӑ-яр. Ха-яр. Яс-ли. Ня-ня. Ваня. Валя. Саня. Маня. Лява.

Аслӑ уяв. Хӗрлӗ ялав. Симӗс хӑяр. Ялан уяр мар. Лявана яслине леҫнӗ. Яслире няня ларнӑ. Вӑл Лявана йышӑннӑ. Вара Лява савӑннӑ. Ашшӗ Ивана вӗрен явма хушнӑ. Иван вӗрен явма вӗреннӗ.

*Я я Ялав. У у Уяв.*

# Юю



юман

О, Ю, А, О, Ы, Ю, О, У, О, Е, И, Ю, И, Я.

а, у, о, и, я, ю, о, ю, я, и, ю, о, я, ы, е, о, е.

Ах. Ох. Юх. Ас. Ос. Юс. Ан. Юн. Ар. Юр. Ню. Лю. Сю. Ню. Мю. Ля-ля. Ню-ню.

Ира. Юра. Шура. Оля. Ва-ля. Ма-ня.

Юра, юрă юрла. Люся, çыру вула. Вася, çара уран ан лар. Юрий, юрлама вĕрен. Ира, ирех ан юрла, çырма вĕрен. Валя, вула. Оля, йĕрле. Маня, хĕрлĕ çырла çи. Вася, çыру çыр. Варя, вĕрен яв. Сима, хăяр çи! Иван аллине варалана, амăшĕ ăна çума хушнă. Вара Иван аллине çунă.



# Ӳ ӳ



сӳре



ҫӳҫ

У, ӳ, у, ӳ. Ус. Ӳс. Уҫ. Ӳҫ. Сӳ-ре. Ҫӳ-ре. Хӳ-ре. Ӳ-ле. Ҫӳ-ҫе. Ҫӳ-хе. Хӳ-ме. Хӳ-ре. Йӳ-нӗ. Ӳлӗм. Сӳс. Ҫӳҫ. Сӳслӗ. Ҫӳҫлӗ. Хӗрхӳ. Хӳхӗм. Хирлӳ. Хӗрӳллӗ. Лаша хӳри. Сухан йӳҫӗ. Хӳме хӳхӗм. Сӳре вӗренне сӳсрен явнӑ. Сӳс-рен вӗ-рен яв-ма вӗ-рен. Хӗл-ле шу-рӑ юр ну-май, ҫулла симӗс ҫулҫӑ нумай. Ӗҫе ӳлӗме ан хӑвар.



# Кк

 

курак куккук

Ак, ака, ук, ука, сак, ҫак, ҫак-ха, ҫук, кас, каҫ, куҫ, кар, кур, кӗр, кӑр, ка-ка, ку-ку, ки-ки, ку-па, капан, пу-кан. Мак, мӑк, ку-рак, кӗ-рӗк, ки-рӗк, пи-лӗк. Ка-та, та-ка, так-мак, тук-мак, пуш-мак. Кур-ка, кӑп-ка, сӑп-ка, лӗп-ке.

Макар кӳлӗре карас тытнӑ. Унтан карас шӳрпи пӗҫернӗ. Шӳрпи тутлӑ пулнӑ. Куккана ҫиме лартнӑ. Кукка юратса ҫинӗ. Вӑл Макара тав тунӑ.

*Кк курак, куккук.*

## Пирĕн автан.

Пирĕн автан пур. Вăл пит хитре. Унăн çĕлĕкĕ хĕрлĕ, сухалĕ те хĕрлĕ. Хӳри кукăр, урисем тапăллă. Мăйĕпе хӳри кăваккăн-симĕссĕн йăлкăшаççĕ.

Ирпе ирех вăл тулта çунаттине шарт çапса, çăварне тем пек хытă карса: ки-ки-рик-ки! юррине текех юрласа çӳрет.



Автан тус, автан тус!
Хĕрлĕ çĕлĕк, ылттăн пуç.
Мĕншĕн ытла ир тăран?
Мĕншĕн хытă кăшкăран?
Мана ирех вăратан.

Автан аватрĕ. Тул çутăлма пуçларĕ.

*Р р Раман. Арман.*

*Ю Ю Юра, юрла.*

# Ч ч

  

ача хачă мулкач

Ача, ха-чă, пă-чă, чĕ-лĕ, чĕ-рĕ, чул. Чăм, чăх, чар, чир, чур, чан, чул, чĕн, чăрăш, чălан, чакак, чуста, чăлха, чышкă, чĕлĕ, чĕре, чĕлхе, чĕрне.

Ача чăнкăр-чанкăр тунипе хĕпĕр-тет. Мулкач чалăш-чĕлĕш сиккелет.



Чĕкеç, чĕкеç, чĕкеçĕм,
кунĕ-кунĕпе вĕçетĕн,
хурт-кăпшанкă пуçтаран,
чĕппӳсене тăрантаран.

Ч ч Чч Хачă. Чĕкеç.

# Ээ



## Эрешмен.

Пĕр эреш-мен кĕ-тес-ре хăй ка-рăмне карса хунă. Унта шăна пырса лекнĕ. Вара эрешмен ăна тытнă.

Эх, эрешмен, эрешмен,
çип арлама пĕлекен,
çипрен карăм каракан,
шăнасене тытакан.

Эр-не, э-мел, э-тем, эпĕ, эсĕ, эпир, эсир, эреш, элек.

   

.ăрă. ка.ака .р.шм.н .ура.

.пир .сир .т.м

.рн. .м.л .пĕ

*Ээ Ээ Ээ Эрешмен.*

# Ьь







выльӑх супӑнь мӑкӑнь

Хал, халь, ан, ань, ун, унь, хут.
Су-пӑнь, мӑ-кӑнь, мӑкӑль-макӑль.
Ву-лать, ҫы-рать, юр-лать, ка-лать,
у-нать, тӑ-рать, ту-рать, са-вать.



Ваньӑн супӑнь пур.
Вӑл супӑньпе ҫӑвӑнать.
Ваньӑн пичӗ, мӑйӗ, алли-
сем тап-таса.

Мӑкӑнь чечекӗ илемлӗ, шурри те
пулать, хӗрли те пулать.

Вальӑн кӗнеке вулас килнӗ. Вӑл
читальнӑна кайнӑ. Читальнӑра Марье
пулнӑ. Вӗсем иккӗшӗ пӗрле вуланӑ.

*ь ь ь супӑнь, выльӑх.*

**Чӗлхене хӑнӑхтармалли:**

на, ня, нья, ну, ню, нью, та, тя, тья, ту, тю, тью, тӳ, ну, су, ху, пӳ, тю, ню, ҫу, лю, лью.

Ваня вулать. Настя ҫырать. Ваньӑна вулама кӗнеке панӑ. Настьӑна ҫырма ручка панӑ.

Выльӑхсем: ӗне, вӑкӑр, пӑру, лаша, тиха, качака, сурӑх, така, путек, сысна.

Ӗне сӗт парать. Лаша туртать. Сурӑх ҫӑм парать. Сысна аш парать. Йытӑ хурал тӑрать. Кушак шӑши тытать.



Ван..ӑвӑн... Кат. вула.. А.а .ырат. А.а чупа.. Шыв ӗ. е.

Пирӗн Ванюк шкула каять. Вӑл вулать, ҫырать, картинка ӳкерет, шутлать. Вӑл лайӑх вӗренет.



# Кӑсия.



— Чи-чи кӑсия, кӑсия!
Ăҫта каян, кӑс.., кӑс...?
— Кантӑр вӑрри ҫимешкĕн, ҫ....
— Ҫынсем курсан мĕн калĕҫ, м...?
— Тарӑп хӑпарӑп хыр тӑрне, х....
— Хырӑм выҫсан мĕн курӑн, м...?
— Хыр йĕкелĕ ҫиетĕп, ҫ....
— Пырна ларсан мĕн курӑн, м...?
— Хыр шалҫипе чавалӑп, ч....
— Юнĕ тухсан мĕн курӑн, м...?
— Шыва кайӑп, чӳхенĕп, ч....
— Шӑнса кайсан мĕн курӑн, м ..?
— Вут хурӑп та ӑшӑнӑп, ӑ....
— Пиҫсе кайсан мĕн курӑн, м...?
— Тапӑп, тапӑп, сӳнтерĕп, с....
— Уру хуҫӑлсан мĕн курӑн, м...?
— Тимĕрҫе кайӑп, сыптарӑп, с....
— Е тимĕрҫи пулмасан, п...?
— Тапӑп, тапӑп,
тапӑ айне кĕрех кайӑп.

Юмах юплĕ, хӯри кукӑр, икĕ вĕҫĕ шĕп-шĕвĕр, ун варринче пӑта пур, туппине тупӑр.

Л л А Анна, лар.

## Кăвакал.

— Нарт-нарт кăвакал,
ăçта каян, кăвакал?
— Шыв хĕррине каятăп.
— Шыв хĕрринче мĕскер пур?
— Унта манăн чĕпсем пур.
— Чĕппӳсемпе мĕн тăван?
— Пулă тытма вĕрентеп,
хурчкасенчен сыхлатăп.



## Хурсем.



Пирĕн хурсем пур. Аçи пуçне каçăртать те: кик! тет. Ами: как! тет. Чĕпписем:
— эх-эх-эх-эх! теççĕ.

Пире, ачасене, курсан, аçи мăйне тăсать, çăварне карса, чшшш! тăвать. Вара пирĕн Анюк, хăраса, аяккалла вăшт! тарать. Эпĕ хăрамастăп та, çавах таратăп: вăл сăхать-çке.

*М Макар, ан ман.*

## Кайăк.



Хĕвелтухăç хĕрелет.
Кайăк ĕçе тытăнать.
Кунĕ-кунĕпе ĕçлет,
чĕпписене тăрантарать.
Вăл хушăрах йăпăртах
йăви çумне вăл ларать,
юрă юрлать, савăнать.

## Шăнкăрч.



Шăнкăр-шăнкăр
шăнкăрчă,
санăн юрру пит аван.
Юрă майĕпе çуначĕ
вĕл-вĕл туса сулăнать.
Кĕмĕл шăнкрав сасси пек,
санăн сассу вылянать,
мана тем пек савăнтарать.

Шăнкăрч пирĕн юлташ, вăл çăвĕпех пирĕн пахчасене, уйсене хурт-кăпшанкăсенчен тасатать.

*Нн Нина çырать.*

## Кĕтӳ ачи.



Çемçе курăк çиййĕнче
путек сурăх сиккелет.
Хăй кĕтĕвĕ патĕнче
ача шăхличĕ калать.
Ырă хĕвел ăшшинче
чĕрипеле савăнать.

## Хураçка.



— Хураçка, ăçта çӳрерĕн, кала-ха?

— Эпĕ паян хирте çӳрерĕм. Ĕнесене, сурăхсене сыхларăм. Халь киле чупса килтĕм. Сана курнипе хĕпĕртесе тăратăп.

Ĕне мĕкĕрет. Лаша кĕçенет. Йытă вĕрет. Автан авăтать. Чăх кăтиклет. Кăвакал нартлатать. Хур какалать. Сурăх макăрать.

*Я Я я Якур вылять*

# Ф ф



## Ферма.

Фома пичче сысна ферминче ĕçлет. Фермăра сыснасем нумай, çурисем те нумай. Пурте шап-шурă. Фома пичче вĕсене пит юратса пăхать, таса усрать, вăхăтра апат парать, шăварать.

Фа-фа, фу-фу, фи-фи, фо-фо, фы-фы, ув-ав, уф, аф. Ферма, Фома, Марфа, Филипп. Формалин, фуфайка, сарафан, шарф, телефон, форточка.

Филипп фотоаппарат туянчĕ. Марфа сарафан тата фуфайка тăхăннă. Тырă кăмпаллă пуласран вăрлăхсене формалинпа çăваççĕ. Фома пичче шарф çыхрĕ те фермăналла утрĕ.

*ф ф Фома фермăра.*

# Ёё    Е, е, Ё, ё, е, ĕ, э

## Ёлка.

Ёлка, ёлка, ёлка!
Питĕ хитре ёлка!
Йĕри-тавра чечексем,
питĕ нумай теттесем.
Ёлка, ёлка, ёлка!
Ешĕл симĕс ёлка!
Пит илемлĕ тумтирпе
пирĕн умра ларатăн!
Ёлка, ёлка, ёлка!
Питĕ чаплă ёлка!
Ачасене астаран,
пурне те савăнтаран.



Лётчик, самолёт, пулемёт. Лётчик самолётпа вĕçет, вăл пулемётпа тăшмансене перет.

Костя лётчиксен шкулĕнче вĕреннĕ. Халĕ вăл самолётпа вĕçет.

*Елена. Ĕлмĕт. Ёлкă.*

Ц (тс) ц. Цифрăсем: 1, 2, 3, 4, 5, 6, 7, 8, 9, 10.

Щ (шч) щ. Ща, щу, щи, ще, що, ца, цу, цы, цо, це, ци, ац, уц, иц, ец, ша, ща, шу, щу, ши, щи, шо, що.



шăл щётки



атă щётки



тумтир щётки

Шăл щёткипе шăл тасатаççĕ. Тумтир щёткипе тумтир тасатаççĕ. Атă щёткипе атă тасатаççĕ.

Ирхине, каçхине шăлна щёткăпа çуса тасат. Шăла щёткăпа тасатмасан, шăл пăсăлать, ыратакан пулать, часах пĕтет. Çăвара шывпа чӳхемесен, щёткăпа тасатмасан, çăвартан шăршă кĕрет, тепĕр чух вар ыратакан пулать.

Таса пурăн — сывлăхлă пулăн, Совет Çарне юрăхлă пулăн.

Ц ц Цифра. Щётка.

## Урама чĕнни.

Атя, Ванюк, урама,
унта сана кĕтеççĕ!
Мишша, Анна, Фёкла
вылямашкăн чĕнеççĕ.

## Тăвайкки ярăнни.



Эх, тăвайкки, тăвайкки,
мĕн чул ача ярăнать!
Çуна, йĕлтĕр е коньки
тăвайккине якатать.
Алăсем шăнса кӳтни
ачасене ним те мар.

## Хĕллехи каç.

Уйăх та çутă,
çăлтăр та нумай,
йăлтăр та ялтăр
йăлтăртатаççĕ.
Ак эп килелле
чупса килетĕп.
Шăкăрт та шакăрт
пӳрте кĕретĕп.
Кăмака çине,
асатте патне,
йăпăр та япăр,
хăпарса кайрăм.
— Ярсам, асатте,
халапна,—терĕм.
Мана асатте
часах итлерĕ.
— Пĕр халап ярăп.
Эс итле, — терĕ.

Вв Вова. Валя.

**Чӗлхене хӑнӑхтармалли:**



Зоя

З, за, за, за, за,
са, са, са, са.
Зу, зу, зу, зу, зу.
Су, су, су, су, су.



Зина

Зо, зи, зу, зе, зы, зю, зё, за, зя, зи, зу.
Зо, со, зу, су, зе, се, зю, сю, зя, ся, зи, си.

Захар, Зина, Зоя, Муза, Лиза, Роза.
Зойӑпа Зина вӑрмана кайнӑ.



Женя

Жа, жу, жо, же, жи.
Ша, шу, шо, ше, ши.
Шар, жар, шур, жур, шир, жир, же.
За-за, жа-жа, зу-зу, жу-жу, зи-жи.
Жилетка, тужурка, журнал, этажерка.

Га, гу, го, ги, ге, га,
го, го, ге, ге, ка, ку,
ко, ки, ке, ха, го, хо,
ге, хе, кар, гар, кур, гур, кир,
гир. Груня, Галя, Гаврил, Гриша.

Гена грузовик ҫине ларнӑ.



Гриша ярӑнать.

*Зз Зоя. Гг Грузовик.*

Ба, ба, бу, бо, би, бы, бе, бя, бю.

Ва, ба, во, бо, ву, бу, ви, би, бе, па-па, ва-ва, ба-ба, по-по, бо-бо, пу-пу, бу-бу, пе-пе, бе-бе, пи-пи, би-би.

Па-па, ба-ба, ву-ву-ву, бу-бу-бу, по-по, бо-бо.



Домна радио итлет.

Борис—рабочи. Гаврил—колхозник. Женя, Зоя, Гриша тата Боря автобус çине ларса кайрĕç. Эпĕ, Галя, Муза тата Роза автомобиль çине ларса кайрăмăр.

Да, до, ду, ды, ди.

Та, то, ту, ты, ти, тю, дю, тя, дя,
те, де, те, де, да-да-да-да,
дя-дя-дя-дя, ду-ду-ду.
Дю-дю-дю. За, жа, га, ба, да.

Дорофей ударник. Федя завода каять. Федя—рабочи.





Родион радио лартрĕ. Вăл кунсеренех радио итлет.

Захар завода кайрĕ. Вăл заводра ударник. Захара заводра пурте хисеплеççĕ.

Заводăн гудок пур. Вăл гудокпа ирпе те, кăнтăрлапа та, каçпа та кăшкăртать. Вара рабочисем завода пухăнаççĕ.

*Жж Женя пионер.*

Ба, бя, бья, па, пя, пья, бю, бью, пю, пью, зя, зья, ся, сья, ва, вя, вья, та, тя, тья, да, дя, дья, до, де, се, сье, ра, ря, рья.

Демьян съезда кайнă. Съезд.
Объявлени.

Пирĕн шкул умĕнче объявлени хăми пур. Унта тĕрлĕрен объявлени çырса çапаççĕ.




Ачасем спектакль пуласси çинчен объявлени çырса çапрĕç. Учитель ача ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕ пуласси çинчен пĕлтерчĕ.

Марье инкен çемйи пысăк. Пирĕн çемьере анне—учительница, аппа—фельдшерица, пичче—инженер.

*Оо Объявлени хăми.*

# АЛФАВИТ.

Аа Ӑӑ Бб Вв Гг

*Аа Ӑӑ Бб Вв Гг*

Дд Ее Ёё Ӗӗ Жж Зз

*Дд Ее Ёё Ӗӗ Жж Зз*

Ии Йй Кк Лл Мм

*Ии Йй Кк Лл Мм*

Нн Оо Пп Рр Сс

*Нн Оо Пп Рр Сс*

Çç Тт Уу Ӳӳ Фф

*Çç Тт Уу Ӳӳ Фф*

Хх Цц Чч Шш Щщ

*Хх Цц Чч Шш Щщ*

ъ Ыы ь Ээ Юю Яя

*ъ Ыы ь Ээ Юю Яя*

Ată. Бригада. Вăкăр. Грузовик. Дежурнăй. Енчĕк. Елка. Ёмĕт. Жнейка. Завод. Ир. Йăмăк. Кайăк. Лаша. Нăрă. Объявлени. Палан. Рак. Сава. Çава. Така. Ут. Ӳт. Ферма. Хапха. Цирк. Чан. Шăл. Щётка. Ыраш. Этем. Юлташ. Яшка.

## Букварь.

Эпир букварь тăрăх саспаллисем палласа тухрăмăр. Эпир вĕреннĕ саспаллисене кунта йĕркелесе çырнă, ăна алфавит теççĕ. Чăваш алфавитĕнче вăтăр çичĕ саспалли. Эпир вĕсене пурне те паллатпăр, вĕсене вулама та, çырма та вĕрентĕмĕр.

*Д д Дуня садра.*

## Эпӗ—вӗренекен.

Эпӗ халӗ вӗренетӗп. Манӑн халӗ букварь, тетрадь, карандаш, ручка,




перо, линейка пур. Анне мана ҫав вӗренмелли хатӗрсене чиксе ҫӳреме сумка ҫӗлесе пачӗ. Эпӗ хам букваре, тетраде, карандаша, ручкӑна тирпейлӗ тытатӑп.

## Манӑн юлташсем.



Манӑн юлташсем — Вадимпа Боря. Эпир пӗрле шкула ҫӳретпӗр, шкулта та юнашарах ларатпӑр. Вадим ман ҫумра сылтӑм енче



ларать. Эпӗ Вадимпа Борьӑна юрататӑп, вӗсем те мана юратаҫҫӗ.

*Вадимпа Борис.*



**Дежурнăй.**

Класра пирĕн дежурнăй пур. Вăл класри йĕркене асăрхать. Эпир ăна итлетпĕр. Вăл хушнине тăватпăр.

Черетпе эпир пурте дежурнăй пулатпăр, класс доскине тасататпăр. Урок пĕтсен, яланах форточка уçатпăр.

Паян эпĕ дежурнăй.

Эпĕ паян шкула ирех килтĕм. Класс доскине, сĕтеле, партăсене шăлса тухрăм, шкулти япаласене тĕрĕслерĕм. Учитель мана мухтарĕ.

*Дарья дежурнăй.*

## Яланах асту.

Шкула таса, тирпейлĕ тумланса пыр.

Шкула урок пуçланиччен çит. Звонок пулсанах класа ху вырăна кĕрсе лар. Урокра тӳрĕ лар, урлă-пирлĕ пăхкаласа, турткаланса ан лар. Учитель вĕрентнине итле. Вăл хушнине пурне те тĕплĕ, вăхăтра туса пыр.

Урок вăхăтĕнче учительтен ыйтмасăр класа кĕме те, класран тухма та юрамасть.



## Симăпа Зина.



Сима иккĕмĕш класра вĕренет. Вĕсем Зинăпа шкула пĕр кун сиктермесĕр çӳреççĕ. Уроксене яланах лайăх хатĕрленеççĕ. Учитель сăмахĕсене аван итлесе лараççĕ, тăрăшса вĕренеççĕ. Çавăнпа та вĕсем яланах пятĕрка илеççĕ.

*Сима радио итлет.*



Юра Юля Алёша Зоя

Юрӑпа Юля шкула ҫӳреҫҫӗ. Вӗсем иккӗш те—пионер. Вӗсем хӗрлӗ галстукпа ҫӳреҫҫӗ. Юля—звено вожатӑйӗ. Юра—горнист. Вӑл горн каласа пионерсене сбора пуҫтарать.

Юрӑпа Юльӑн шӑлнӗ—Алёша, йӑмӑкӗ—Зоя. Алёша ҫичӗ ҫулта. Вӑл кӑҫал шкулта пӗрремӗш класра вӗренет. Зоя пилӗк ҫулта анчах. Вӑл шкула ҫӳремест, вӑл ҫамрӑк.

Юльӑпа Юра иккӗшӗ те вӗренеҫҫӗ. Вӗсем пятёрка илеҫҫӗ. Алёша та вӗсенчен юласшӑн мар.

*Зина кӗнеке вулать.*



## Савăнатпăр.



Савăнатпăр, хĕпĕртетпĕр
эпир, совет ачисем.
Пире пурте юратаççĕ,
пире пурте пит саваççĕ.
Пире Сталин юрататъ,
савăк пурнăç вăл паратъ.
Учительсем юратаççĕ,
пире савса вĕрентеççĕ.
Савăнатпăр, хĕпĕртетпĕр,
эпир, совет ачисем.





*Эпир савăнатпăр.*

Хир илемĕ каять,
сĕм вăрман çаралать.
Пĕрмай çумăр çăвать.
Вăл хăçан пулать?



Кунсем кĕскелеççĕ. Хĕвел ирех тухмасть. Çанталăк сивĕнерех пырать. Сивĕрех çилсем вĕре пуçлаççĕ. Çумăр час-часах пĕрĕхет.

Йывăç çулçисем тăкăнаççĕ. Кайăксем ăшă еннелле каяççĕ.

Колхозниксем авăн çапаççĕ. Пахча çимĕçĕсене пуçтараççĕ: купăста касаççĕ, çĕрулми, чĕкĕнтĕр, йӳç кăшман, сахăр кăшманĕ, хĕрлĕ кăшман, сухан, ыхра кăлараççĕ те нӳхрепе пуçтарса хураççĕ.

Ку хăçан пулать?

Ваттисен сăмахĕ:

*Кĕр хитре кĕлтепе, çур хитре чечекпе.*

Пĕл:

*Кĕлти кĕрет, арпи вĕçет,*
*тырри юхать, улăм тухать.* Çавă мĕн?

Эпир совет ачисем.



Хирсенче юр анчах.
Ҫырмара пăр анчах.
Сивĕтет аванах.
Вăл хăҫан пулать?

Кун кĕскелчĕ, ҫĕр вăрăмланчĕ. Хĕвел тухать те ҫӳлелле хăпармасть, часах пытанать. Пĕвери, кӳлĕри шывсем пăрпа витĕнеҫҫĕ. Пур ҫĕрте те шап-шурă юр выртать.

Колхозниксем вăрмантан вутă турттараҫҫĕ. Ачасем шкулта вĕренеҫҫĕ. Пушă вăхăтра йĕлтĕрпе, ҫунашкапа, конькипе ярăнаҫҫĕ. Ку хăҫан пулать?

## Ю р.

Эпир, юрсем, пит ҫăмăл,
ҫил вĕрнине итлетпĕр.
Вĕлтĕртетсе ҫаврăнса,
сиксе вĕҫсе ҫӳретпĕр.

Ҫил-тăвăлтан хăраса,
таҫта-таҫта ҫӳретпĕр.
Ăҫта ҫитнĕ, вăл тĕле
шурă ҫитти витетпĕр.

*Хĕлле сивĕ. Кун кĕске*

## Йĕр тăрăх.



Петя хăйĕн аслашшĕпе пĕрле вăрмана кайнă. Юр тин çеç çунă.

— Петя, кунта нумай кайăксем çÿреççĕ-мĕн, тет аслашшĕ. Петя йĕри-тавра пăхкалать — нимĕнле кайăк та курăнмасть.

— Асатте, кайăксем çук-çке, — тет вăл.

— Эпĕ йĕр тăрăх куратăп,—тет аслашшĕ. Акă пăх-ха кунта! Акă кĕске хÿре сиксе кайнă. Акă тилĕ йĕрĕ. Унта пăши яшлаттарса кайнă. Кунта кашкăр йĕрĕ те пур.

## Пакша.



Хĕлле вăрманта сивĕ. Йĕри-тавра юр. Пакша йывăç хăвăлĕнче пурăнать. Унта çемçе те ăшă. Пакша хăйне валли çимĕç нумай хатĕрлет: мăйăр, йĕкел пит нумай. Вĕсене вăл шĕкĕлчет.

Хушăран тула та тухса пăхать. Туратсем тăрăх сиккелет те каллех хăйĕн хăвăлне кĕрсе выртать. Пакшана хĕлле те аван.

*Пакша, мăйăр.*



## Упа.

Эпӗ упа—утаман,
ик урапа утакан,
пур кайӑкран хытӑрах
мӗкӗрттерсе улакан.

Ҫӑва тухсан—вӑрманта
вӗллесене ватакан,
тутлӑ пылне ҫиекен,
ӗнесене тытакан.

Хаяр сивӗрен хӑраса,
хӗлӗпеле шӑтӑкра,
ура тупань ҫуласа,
вилнӗ пекех ҫывӑрап.

Çуркунне тин вăранап,
тинех çисе тăранап.
Вара сиксе ташлатăп,
йăкăш-якăш шăватăп.



**Упапа этем** (юмах).

Пĕрре ĕлĕкрех упапа этем туслашнă. Иккĕшĕ пĕрле çарăк акма шут тытнă.

Этемĕ калать упине:

— Сана тăрри пултăр, мана тымарри те юрĕ,—тет.

— Юрĕ,—тет упа.

Сухаларĕç, çарăк акрĕç.

Çарăк пулчĕ пит аван.

Этем илчĕ тымарне—чи тутлă çарăкне. Упи илчĕ тăррине—ним сĕтексĕр çулçине.

Курать упа—улталарĕ этем. Шухăшлать: курăн, мана улталаймăн, тет.

Тепĕр çулне этемĕ татах калать упине:

— Упа тус, атя каллех иккĕн пĕрле акăпăр, тет.

— Юрĕ,—тет упи,—анчах тăррине халь эсĕ ил, мана тымаррине пар,—тет.

— Юрĕ, юрĕ,—тет этемĕ,—эсĕ каланă пек пултăр,—тет.

Акрĕç вĕсем тулă.

Тулли пулчĕ пит аван.

Килĕшнĕ пек уйăрчĕç. Этем илчĕ тăррине—кулачăлăх туллине.

Упи илчĕ хăмăлне,—хăрса кайнă улăмне.

Тарăхнипе упа вăрманалла каллех кайрĕ пурăнма. Çавăнтан кайран этемпе упан текех килĕшӳ пулман, тет, вара.

## Халапсем.

Мĕн акнă, çавă шăтать, теççĕ. Çамрăкла вĕренеймесессĕн, ватăлсан вĕренме хĕн вара. Çын çурăмĕ çинче çĕклем çăмăл пек. Турчăка пур çинче никам та аллине вутта чикмест. Чавса çывăх та, çыртма çук.

Шăшкĕ майăрĕ.

   

м....  й....  к....  ç....

   

с....  ç....  х...  к......

   

п....  п....  п...  с...






к.....  с....  к......  ш....

Сăмахсем: пуртă, çырла, пăчкă, сава, кĕрепле, мăйăр, йĕкел, сухан, пăра, çарăк, кăмпа, сенĕк, купăста, кĕреçе, шăпăр, хăяр.

*Юман йĕкелĕ.*



Юрӗ ирӗлет.
Улӑхӗ чӗрӗлет.
Кунӗ хушӑнать.
Вӑл хӑҫан пулать?

## Ҫуркунне.

Хӗвел хытӑрах ӑшӑтать. Юрӗ ирӗлсех пырать. Кураксем, шӑнкӑрчсем, тӑрисем вӗҫсе килеҫҫӗ. Ҫырмасенче шыв кӗрлесе юхать. Курӑк ҫитӗнет, чечексем ҫурӑлаҫҫӗ.

Ачасем урама ҫара уран тухаҫҫӗ, лаптаппа выляҫҫӗ.

Килчӗ ырӑ ҫуркунне,
килчӗ ячӗ ӑшӑтса,
хӗвел сават тӗнчене,
хӗл ыйхинчен вӑратса.

*Хӗвел ӑшӑтать.*

Хĕвел хĕртет.
Çырла пиçет.
Тырă саралать.
Çав хăçан пулать?



## Çулла.

Çулла ăшă, пит лайăх. Уйсенче тырпул çитĕнет. Улăхра симĕс курăк çитĕнет. Пахчара тĕрлĕ çимĕç çитĕнет.

Çулла колхозниксем утă çулаççĕ, тырă выраççĕ, ака-суха тăваççĕ, авăн çапаççĕ.

Ачасем те ашшĕ-амăшĕсене пулăшаççĕ: выльăхсене пăхаççĕ, пучах пуçтараççĕ, лашасемпе çӳреççĕ.



Çулла колхозăн садĕнче: панулми, слива, груша, хурлăхан, хăмла çырли, çĕр çырли çитĕнеççĕ.

Колхозăн пахчинче мĕн çитĕнет? Çырăр.

*Çырла пиçет.*



## Комбайн.

Ачасем урамра чупаççĕ. — Комбайн! Комбайн!—тесе кăшкăраççĕ.

Колхоз тырри çинче пы-ысăк машина кĕрлесе пырать. Вăл вырать, çапать, сăвăрать, тап-таса тыррине арча пекки ăшне тултарать.

Акă грузовик пырса та çитрĕ. Комбайн çинчи таса тырра хăй çине юхтарса илчĕ те вĕçтерчĕ колхоз амбарне пушатма. Ун вырăнне тепĕр грузовик çитсе те тăчĕ.

Çапла вара комбайн пĕр кунта тем пысăкăш хирти колхоз тыррине пуçтарса тирпейлерĕ.

Ыйту: Ачасем мĕн тесе кăшкăрнă? Комбайн мĕн тунă? Грузовиксем мĕн тунă? Комбайн мĕнтен пит усăллă?

*Комбайн-машина.*



## Комбайн.

Ачасем урамра чупаççĕ. — Комбайн! Комбайн!—тесе кăшкăраççĕ.

Колхоз тырри çинче пы-ысăк машина кĕрлесе пырать. Вăл вырать, çапать, сăвăрать, тап-таса тыррине арча пекки ăшне тултарать.

Акă грузовик пырса та çитрĕ. Комбайн çинчи таса тырра хăй çине юхтарса илчĕ те вĕçтерчĕ колхоз амбарне пушатма. Ун вырăнне тепĕр грузовик çитсе те тăчĕ.

Çапла вара комбайн пĕр кунта тем пысăкăш хирти колхоз тыррине пуçтарса тирпейлерĕ.

Ыйту: Ачасем мĕн тесе кăшкăрнă? Комбайн мĕн тунă? Грузовиксем мĕн тунă? Комбайн мĕнтен пит усăллă?

*Комбайн-машина.*

# ÇЫРĂР.



Сăмахсем: çерçи, кăвакарчăнсем, ĕне, чанасем, сурăх, улакатка, лаша, йытă, чĕрĕпсем, тăрна, сысна, чарлан, качакасем, слон, упа, тăмана.



## Чӗрӗп.

Ачасем вӑрманта чӗрӗп тупнӑ. Вӗсем ӑна киле илсе каясшӑн пулнӑ. Анчах ӑна ниепле те алӑпа тытма май пулман. Чӗрӗпӗн йӗпписем алла тирнӗ. Вара ачасем ӑна кепка ӑшне патакпа йӑвалантарса хунӑ та шкула илсе пынӑ.

## Шапасем.



Ачасем кӳлӗ хӗррине кайнӑ. Вӗсем шапасем ларнине курнӑ. Ачасем шапасене чулпа пере пуҫланӑ.

Пӗр шапи ачасене каларӗ, тет:

— Чарӑнӑр, ачасем, ан перӗр! Сире вӑйӑ та, пире вилӗм,—терӗ, тет.

## Чĕкеççем.



Пӳрт карнизĕ айĕнче чĕкеç йăви пулнă. Унта чĕкеç чĕпписем ларнă. Вĕсем сарă сăмсисене кăларса чĕвĕлтетнĕ.

Иванпа Павăл иртсе пынă. Павăл чул илет те йăва çинелле перет. Пĕр чĕппи тухса ӳкет. Юрать, вилмест.

Чĕкеççем хурлăхлăн çуйăхса вĕçеççĕ.

Иван Павăла чарать, урăх пеме памасть. Иван хăвăртрах чĕкеç чĕппине илет те йăвине хăпарса хурать.

Вара чĕкеççем савăнăçлăн чĕвĕлтетнĕ.

### Чĕкеç юрри.



Пĕчĕкçеççĕ питлĕ-куçлă,
эреветлĕ, теветлĕ,
хӳри вĕçне туй килнĕ,
Якат Петĕр пăчăнтăр-р-р!



Сармантейĕн сарă чăххи
сар çăмарта тунă, тет.
Ăна шăши пынă та
хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет.
Сармантей те макăрать,
сар чăххи те кăтиклет.

Чăх чĕпсем кăларнă. Унăн чĕпписем чупса çӳреме тытăннă. Вĕсем, пĕчĕк урисемпе чақаланса, хуртсем шырама пуçланă.

Хурчăкана курсан, амăшĕ чĕпписене çунаттисем айне пытарнă.

Туппине тупăр:

Пуртăсăр, савасăр пичке тăвĕ. Пĕчĕк пичкере икĕ тĕслĕ çимĕç пур.

Мĕн пулнă? Каласа пар.



## Çарă к.

(Юмах.)

Пĕр старик çарăк лартнă. Çарăкĕ пулнă, тет, пит пысăк. Старик çарăк кăлармa пынă, тет. Туртать, туртать,— туртса кăлараймасть.

Старик хăйне пулăшма карчăкне чĕнсе пырать. Карчăк тытать старикрен, старик тытать çарăкран. Туртаççĕ, туртаççĕ,— туртса кăлараймаççĕ.

Карчăк чĕнет пĕчĕк хĕрне. Пĕчĕк хĕр тытать карчăкран, карчăкĕ — старикрен, старик—çарăкран. Туртаççĕ, туртаççĕ,— туртса кăлараймаççĕ.

Пĕчĕк хĕрĕ чĕнет йыттине. Йытти тытать пĕчĕк хĕртен, пĕчĕк хĕрĕ—карчăкран, карчăкки — старикрен, старикки— çарăкран. Туртаççĕ, туртаççĕ, — туртса кăлараймаççĕ.

Йытти чĕнет кушакне. Кушакĕ тытать йытăран, йытти—пĕчĕк хĕртен, пĕчĕк хĕрĕ — карчăкран, карчăкки — старикрен, старикки— çарăкран. Туртаççĕ, туртаççĕ,— туртса кăлараймаççĕ.

Кушакĕ чĕнчĕ шăшие. Шăшийĕ тытрĕ кушакран, кушакĕ — йытăран, йытти — пĕчĕк хĕртен, пĕчĕк хĕрĕ — карчăкран, карчăкки — старикрен, старикки—çарăкран. Туртрĕç, туртрĕç те, çарăка туртса кăларчĕç.

КАМ МӖН ТУНИНЕ ПӐХСА ÇЫР.



1. Андрюша. 2. Боря. 3. Галя. 4. Дуня. 5. Гриша. 6. Вера. 7. Таня. 8. Люба. 9. Вовӑпа Вася. 10. Зина. 11. Миша. 12. Тимӗрçӗ. 13. Колхозниксем. 14. Серёжа.

Пулӑ тытать, вутӑ татаççӗ, туптать, вылять, пит çӑвать, вулать, çырать, картинка ӳкерет, шкула каять, чупаççӗ, лаша ӳкерет, картинка пӑхать, радио итлет, çыру çырать.



**Тӑван уй-хир.**

Тикӗс тырӑ тинӗс пек,
пӗр йӑран та курӑнмасть.
Кунӗ шӑрӑх та тӳлек,
пӗр пучах та хусканмасть.

Ав—комбайн хир тавра
карап пек ишсе пырать.
Вӑл вырать, ҫапать тырра,
пит тирпейлӗ пуҫтарать.

Комбайнӗрӑн умӗнче
ылттӑн ҫӑлтӑр курӑнать.
Ялкӑшать хӗвел ҫинче,
уй-хире вӑл ҫутатать.

Тӑрӑшса ӗҫленӗрен
ҫын ӳкерчӗк ҫӑлтӑрпала.
Вӑл—герой. Эп те ӳссен
ҫавӑн пек тӑрӑшмалла.



**Владимир Ильич Ленин.**

Владимир Ильич Ленин мĕнпур ĕç халăхĕн çулпуçĕ, аслă учителĕ, çывăх тусĕ пулнă. Вăл рабочисемпе хресченсемшĕн тăрăшнă.

Ленин ачасене те пит юратнă. Вăл рабочисемпе хресченсен ачисем аван пурăнччăр, аван вĕренччĕр, тенĕ.

Пур ĕç çыннисем те Ленина юратаççĕ, ĕмĕрех астăваççĕ.

В. И. Ленин январĕн çирĕм пĕрремĕшĕнче вилнĕ. Унăн ӳчĕ Мускавра мавзолейре выртать. Ăна курма питĕ нумай çынсем пыраççĕ.

Эпир Ленина нихçан та манас çук. Вăл вĕрентнĕ пек, вăл хушнă пек пурăнатпăр.



**Иосиф Виссарионович Сталин.**

Сталин—пĕтĕм ĕç халăхне Ленин çулĕпе ертсе пырать. Вăл пирĕн çулпуç, аслă учитель.

Иосиф Виссарионович Сталин пире савăнăçлă та телейлĕ пурнăç туса пачĕ.

И. В. Сталин—ачасен хаклă юлташĕ.

Сталин—пирĕн кун-çул, çут хĕвел, вăйхăват, мухтавлă çулпуç.

Ленин, Сталин ячĕсем
ĕмĕр пирĕн чĕрере.
Эпир Ленин ачисем,
эпир Сталин ачисем,
пире парти ӳстерет.
Сывă пултăр совет халăхĕ!
Сывă пултăр Аслă Сталин!



В. М. Молотов.



Н. М. Шверник.

## Тăван çĕршыв—пирĕн анне.

Хамăр пурнакан çĕршыва эпир Тăван çĕршыв тетпĕр, мĕншĕн тесен унта пирĕн аттесем, асаттесем пурăннă. Эпир çав çĕршывра çуралнă, унта пирĕн тăван чĕлхепе калаçаççĕ, çав çĕршывра пире пурте тăван. Эпир хамăр çĕршыва анне тетпĕр, мĕншĕн тесен вăл пире хăйĕн çăкăрĕпе тăрантарса ӳстерне, хăйĕн шывне ĕçтерсе çитĕнтерне, хăйĕн чĕлхине вĕрентнĕ. Вăл пире, анне пекех, тĕрлĕ тăшмансенчен сыхлать.

Этемĕн тăван амăшĕ пĕрре кăна, Тăван çĕршывĕ те унăн пĕрре çеç.

## Çамрăк паттăрсем.

Пĕр хулана нимĕçсем пырса кĕнĕ. Урам хушшинче нимĕç грузовикĕсем нумай пулнă. Вăл хула патне Совет Çарĕ çывхарса пынă. Нимĕçсен тармалла пулнă. Çавна сиссе, ачасем грузовиксен çăраççийĕсене илсе тарнă та пытарса хунă. Унччен те пулман, хулана Совет Çарĕ çитсе кĕнĕ.

Нимĕç салтакĕсем грузовиксем çине ларса тарасшăн пулнă. Анчах грузовиксене тапратса яма пултарайман. Вара, машинăсене пăрахса, хуларан çуранах тухса тарнă. Нумайăшĕ тыткăна лекнĕ.





**Утлă çар.**

Утлă çар сиккипе пырать. Çитсе çапрĕ вăл тăшмана. Касрĕ, вакларĕ, аркатрĕ. Хĕрхенместь вăл тăшмана.

Вутран вĕри казаксен лашисем. Ут ури айĕнче юр ирĕлет. Çивчĕ хĕçсем йăлтăр-татăççĕ. Утлă çара Сталин юлташ мухтарĕ. Вĕсен ялавĕ çинче Ленин сăнĕ.

Германи мул хуçийĕсем пире хăйсен чури тăвасшăн пулчĕç. Вĕсем пире хирĕç вăрçă пуçласа ячĕç.

Анчах пирĕн çар Тăван çĕршыва тăшман аллине памарĕ. Вăл тăшмана çĕмĕрсе тăкрĕ.

Эпир чура пулас çук.
Тăшман пире çĕнес çук.
Совет Çарĕ—пирĕн вăй.
Сывă пултăр Совет Çарĕ!



## Хураçка.

Пирĕн Хураçка ятлă пысăк йытă пур. Эпир ăна çунашкана кÿлсе çÿреме вĕрентрĕмĕр.

Пĕрре эпир, ачасем, Хураçкана кÿлтĕмĕр. Эпĕ çуни çине лартăм та: „Ну, атя, Хураçка, урамалла!“—тесе пушăпа çат! тутартăм.

Хураçка çăтăр-çатăр тутарса, çунимĕнĕпе кĕлет айне кĕрех кайрĕ. Манăн пуçа кĕлет пĕрени çумне шан! тутарса хăварчĕ.

Пĕл:

*Тимĕр йыттăн сÿс хÿре.*

## Федя.

Федьăна ашшĕ, сухаран таврăнсассăн, ывăннă лашисене кĕтĕве кайса яма хушнă.

— Асту, лашасем ывăннă, хытă ан хăвала,—тенĕ ашшĕ.

Федя пĕр лаши çине утланнă, теприне çавăтнă та ашшĕнчен уйрăлсанах лашасене сиккипе чуптарса кайнă. Çул çинче бригадир курнă та Федьăна кăшкăрса тăратнă.

— Ывăннă лашасене çав тери хытă чуптарма юрамасть!—тенĕ вăл. Федьăна намăс пулнă, вăл, киле таврăнсан, бригадир ятланине ашшĕне каланă, ашшĕ умĕнче ӳкĕннĕ. Урăх вара Федя нихçан та ывăннă лашасене хытă хăваламан.

## Шкула кайни.

Ачасем шкула кайма пуçларĕç, эпир Анюкпа сумкăна çăкăр татăкĕ чикрĕмĕр те шкула кайма тухрăмăр. Анне курчĕ те:

— Ăçта каятăр?—терĕ.

— Шкула!—терĕмĕр.

Анне мана: „Эсĕ халĕ пилĕк çулта çеç, эсĕ пĕчĕккĕ, сана ямастăп",—терĕ.

Анюк хĕпĕртесе шкулалла чупрĕ, эпĕ, хурланса, ун хыççăн пăхса тăрса юлтăм.

Манăн питĕ шкула вĕренме каясси килетчĕ. Анчах мана çичĕ çула çитмесĕр

шкула ямарĕç. Эпĕ кулленех, ир çинче, çывăрса тăрсан:

— Анне, эпĕ паян çичче çитрĕм-и, мана шкула кайма юрать-и?—тесе ыйтаттăм.

## Шкулта вĕренни.

Пĕрре, кĕркуннепе, амăшĕ Ваньăна калать: Ваня, эсĕ ĕнтĕ сакăр çула кайрăн, шкула кайма юрать. Ыран вĕренме пуçлаççĕ, шкула кайма хатĕрлен, тет. Ваня шкула каймалли япалисене: букварьне, карандашне, тетрадьне каçхинех хатĕрлесе хучĕ.

Тепĕр кунне ирех Ваня, таса тумтир тăхăнса, çĕнĕ сумка çакрĕ те шкула вĕçтерчĕ.

Ваня шкулта питĕ тăрăшса вĕреннĕ. Вăл отличник пулнă. Килте, уроксем хатĕрлесен, пĕчĕк самолётсем тунă.

Вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, Ваня лётчиксен шкулне вĕренме кĕнĕ. Халĕ вăл пысăк самолётпа вĕçет.

Ваня—хăюллă лётчик.



## Букварь вĕçĕ.

Халĕ эпир, ачасем,
хут вулама пĕлетпĕр.
Кирек мĕнле сăмаха
такăнмасăр вулатпăр.
Çырасса та пит яка
пĕр йĕркепе çыратпăр.

---

Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

Рисунки и обложка художника *М. Михаэлис.*
Художественный редактор *Г. Харлампьев.*

Редактор *Ф. Шапошников.* Тех. редактор *Н. Степанов.*

НТ 00922. Подписано к печати 12/VIII-1949 г.
Заказ № 1442. Объем 5,25+0,125 п. л. Тираж 5.000 экз.

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности
при Совете Министров ЧАССР.
Гор. Чебоксары, Володарского, 5.

К

№ 2
ОТК

Цена 2 руб. 40 коп.

П. А. ЕФРЕМОВ
БУНВАРЬ
на чувашском языке
ЧУВАШГОСИЗДАТ
ЧЕБОКСАРЫ — 1949